# Конкурс «Самый классный классный»



## Петрова Галина Вадимовна - классный руководитель 10 класса МОУ «Перво - Чурашевская СОШ» Мариинско – Посадского района Чувашской Республики

- 7 июня 1955 года рождения
- Курируемый класс – 10
- Стаж работы в качестве классного руководителя 26 лет
- Учебный предмет: чувашский язык и литература



# Немного о себе

В 1977 году окончила Чувашский Государственный Университет им. И.Н. Ульянова. После окончания вуза вернулась в родную школу. За это время выпустила 3 класса. В 1986 году по итогам аттестации мне присвоили звание «Старший учитель», в 1993 году – первую квалификационную категорию. С 1994 года являюсь руководителем РМО учителей чувашского языка и литературы. Четыре раза была избрана делегатом Чувашского Национального Конгресса. В апреле 2004 года выступила на первом международном симпозиуме, посвящённом 70 летию Е.В. Федоровой, по вопросам преподавания литературы. 30 декабря 2002 года за значительные успехи в организации и совершенствовании учебного и воспитательного процессов, формирование интеллектуального, культурного и нравственного развития личности, большой личный вклад в практическую подготовку учащихся и воспитанников была награждена нагрудным знаком « Почетный работник общего образования Российской Федерации».

С 2006 года работаю классным руководителем 10 класса.

Воспитательная система класса направлена на создание дружного, работоспособного класса, на развитие творческих способностей учащихся, на развитие самоуправления ученического коллектива.

# Мои питомцы



Дружный десятый

# Формы воспитательной работы с классом Программа «Здоровья»



Заочное путешествие в мир спорта

# Программа «Интеллект»





«Звездный час», «Поле чудес»



49-50 №, 2006, раштав, 14
Тантăш
5

# ÇАК ÇĔРЕ ЭСИР ПĔЛЕТĔР-И?

Петĕр Хусанкай çуралнăранпа 100 çул çывхарнине халалласа чăваш чĕлхи эрнинче тĕрлĕ мероприяти иртрĕ. Малтанах 5-8-мĕш классем хушшинче "Çак çĕре эсир пĕлетĕр-и?" викторина пулчĕ. Чăваш çĕр-шывĕпе, паллă сăвăç пултарулăхĕпе çыхăннă ыйтусене хуравларĕç ачасем. Республикăри районсемпе хуласем, паллă композиторсемпе ӳнерçĕсем, писательсемпе поэтсем çинчен ытларах пĕлме май пачĕ викторина. Пур енлĕн аталанма, тавра курăма анлăлатма пулăшрĕ.

Ачасен хастарлăхĕ вĕрентекенсене те савăнтарчĕ пулĕ. Кашниех ыйтусене хуравлама тăрăшни хамăра та тĕлĕнтерчĕ. Вĕренекенсен куçĕсенче – савăнăç хĕлхемĕ. Эппин, уяв килĕшнĕ вĕсене.

Н.Краснова, И.Васильева, М.Кондратьева, А.Фадеева, Т.Шорникова пуринчен те пултаруллăрах пулни палăрчĕ. Вĕсем – çĕнтерӳçĕсем.

Аслă классем валли вара "Тĕлĕнтермĕш уйĕ" вăййа иртерчĕç. П.Хусанкай сăвăç ачалăхĕпе çамрăклăхне, кун-çулĕнчи чи интереслĕ, пысăк пĕлтерĕшлĕ самантсене çутатма, аса илме тăрăшрĕç.

*"Сиктĕрме! Нумай сиктертĕн*
*Ешĕл симĕс сăпкунта.*
*Малтанхи хавасăм, тертĕм,*
*Хура-шурăм – йăлт кунта!"*

– çырнă сăвăç ачалăх кунĕсене иртернĕ тăван кĕтесĕ пирки. Кашни çыншăнах çуралса ӳснĕ вырăнсем – чи хаклисем. Сиктĕрме сăвăçа тухăçлă ĕçлеме, тăван халăхшăн тăрăшма вăй-хал парса пынă.

Вĕрентекенсем те поэт пурнăçĕнчи эпир халиччен пĕлмен кăсăк самантсем çинчен каласа пачĕç.

Кашни сăвăçăн хăйĕн юратнă çăл куçĕ пулнă. К.Ивановăн – Слакпуç, П.Хусанкайăн – Ĕнчĕ. Ял халăхĕ мĕн авалтан кунтан шыв ăсса пурăннă. Çырма тĕпĕ хăйăрлă пулнăран хĕвел çинче ĕнчĕ /жемчуг/ евĕр курăннă...

Ачасем вăййа хаваспах хутшăнчĕç. Кустăрма умĕнче пурте тăраймарĕç паллах. Финала тухассишĕн ăмăртакансене хавхалантарсах пычĕç.

Виçĕ турпа иртрĕ вăйă, кашнинчех виçшерĕн тупăшрĕç.

Эпĕ финала тухрăм. Супервăййăна хутшăнтăм. Пире пурне те парнесем парса хавхалантарчĕç.

**Алина ИЛЬИНА, 9 класс.**
ЧР, Сĕнтĕрвăрри районĕ,
Урхас Кушкă.



# ЫТТИСЕМ ÇЫРАÇÇĔ-ÇКЕ. ЭПИР МĔНРЕН КАЯ?

Кĕнеке, хаçат-журнал вулама юратман ачан тавра курăмĕ мĕнле ÿстĕр-ха? Телевизор пăхса-и? Шел пулин те, вĕсен чун-чĕрине пуянлатма пулăшакан, усăллă передачăсем çителĕксĕр паян. Хаçат алла илмен çамрăк кĕнекепе туслашасси те иккĕлентерет.

– Республикăри ытти шкулта мĕнле пурăннине те пĕлес килет. Хаçат-журнал вуламасан пурнăç та интереслĕ мар. Çавăнпа ачасем хăйсен хаçачĕпе – "Тантăшпа" туслашчăр тетпĕр, – кăмăллăн сăмахлать Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Урхас Кушкă шкулĕнче чăваш чĕлхипе литература вĕрентекен Галина Вадимовна Петрова та.

Хăйĕн вĕренекенĕсене нумай пулмасть редакцие илсе килчĕ хастар педагог. Вулакансен çырăвĕсене мĕнле хатĕрлени те, хаçата мĕнлерех калăплани те – пĕтĕмпех кăсăклантарчĕ ачасене. Хăйсен пуç ватмăшĕсемпе сăввисене те, хайлавĕсене те парса хăварчĕç. Елена Фадеева, хаçатăн хастар юнкорĕ, «Тантăша» халаллана сăввине вуласа пачĕ.

– Манăн материал пичетленсе тухсан шкулти ытти вĕренекенсен те кăмăлĕсем çĕкленеççĕ. Хăйсем те редакцие çырусем ăсатаççĕ, – тет Елена.

"Çеçпĕл" ача-пăча пĕрлешĕвне çÿрет тăрăшуллă хĕр. Хаçатри материалсене унта пĕрле вуласа сÿтсе яваççĕ иккен.

Лена тĕслĕхĕпе çунатланса Наташа Краснова, Маша Васильева, Лада Андреева, Настя Бондарева, Василий Терентьев та "Тантăшпа" çыхăну тытма пуçлана. Хăйсен учителĕ Галина Вадимовна та хавхалантарса пырать вĕсене. Çĕнĕ темăсем сĕнет.



Шкулта 30 çула яхăн ĕçлекен педагог вĕренекенĕсен шухăш-кăмăлне пĕлсе тăрать. Кам мĕнпе кăсăкланнине тÿрех асăрхать.

Шкулта "Сентти" фольклор ушкăнĕ те йĕркеленĕ вĕсем. 20 çула яхăн ачасене чăваш юрри-ташшипе туслашма пулăшаççĕ. Музыка учителĕ П.Г.Иванова юрлама вĕрентет, С.Г.Сергеева ташă вăрттăнлăхĕсене уçса парать, директорăн воспитани енĕпе ĕçлекен çумĕ Э.Ю.Пелеева тата Г.В.Петрова кирлĕ материалсем пухаççĕ. Пĕрле килĕштерсе ĕçленĕрен "Пĕчĕк çеç путене" фольклор фестивалĕнче кашниччех малти вырăна тухаççĕ те.



– "Тантăша" яланах вулатпăр. Пĕр-икĕ çул каялла хамăр та хаçатпа çыхăну йĕркелеме шутларăмăр, малашне те туслă пулар, – терĕ Галина Вадимовна сыв пуллашнă май. – Ыттисем çыраççĕ-çке. Эпир мĕнрен кая?

**Алина ПУЗЫРНИКОВА.**

***Сергей ЖУРАВЛЕВ сăн ÿкерчĕкĕсенче:*** Вика Иванова та "Тантăшпа" çывăхрах туслашасшăн; Алина Ильина, Таня Солина, Юлия Федорова "Самант" журналпа паллашаççĕ.

# «Я и мой мир». Посещение музеев и театра города Чебоксары. Апрель 2007 г.





# «Я и моя Родина».



Теплая встреча со знаменитой чувашской поэтессой – Лидией Сарине. Март 2007г.

# «Память»




Встреча с выпускником школы, с подводником Северного Флота – с Петровым Артемом

# «Я среди людей»





**ПИРĔН САМАХ**

2007
Ака
14
шăматкун
№ 35 (8903)

## Алла паспорт илчĕç

Çак кунсенче Урхас Кушкă шкулĕнче 9-мĕш класра вĕренекенсемшĕн чăннипех те пысăк, асра юлмалли паллă уяв иртрĕ. Савăнăçлă лару-тăрура вĕсене алла пĕрремĕш документ – паспорт тыттарчĕç. Çак ятпа хăнасем те йышлăн пулчĕç. Чăваш Республикинчи Раççей РМС управленин Сĕнтĕрвăрринчи территори пункчĕн начальникĕ Галина Николаевна Васендина, учетсен инспекторĕ Ираида Петровна Петрова, райадминистрацин чрезвычайлă лару-тăрупа граждансла оборонăн пайĕн пуçлăхĕ Николай Петрович Борисов килнĕ.

Г. Васендина вĕренекенсене паспорт илме вăхăт çитнĕ ятпа ăшшăн саламларĕ, çамрăксене çак яваплă документа тирпейлĕ тытма сĕнчĕ, ăнсăртран ăна çухатас пулсан мĕнле йĕркепе çĕнĕрен илме май пуррипе те паллаштарчĕ.

Пирĕн шкула килнĕ хăнасем, çавăн пекех Урхас Кушкă ял поселенийĕн пуçлăхĕ О. Леонтьев тата шкул директорĕ С. Николаев пурте тăххăрмĕшĕсене паспорт илнĕ ятпа ăшă сăмахсемпе саламларĕç, Раççей çĕршывĕн чăн-чăн çыннисем пулма чĕнсе каларĕç. Шкулти пултарулăх ушкăнĕ вара пурне те хаваслă юрă парнелерĕ.

Уяв вĕçĕнче 9-мĕш класс ертӳçи Г. Петрова ачасен ячĕпе хăнасене тав турĕ, вĕренекенсене Раççей çĕршывĕн тивĕçлĕ гражданинĕ пулма, шкулта лайăх вĕренме, пурнăçăн тĕрĕс çулĕпе утма ырă сунчĕ. Ачасен куçĕсенче савăнăç шевли вылярĕ. Уяв кăмăллă та килĕшӳллĕ иртрĕ. Юлашкинчен асăнмалăх пурте пĕрле сăнӳкерчĕк ӳкерттерчĕç.

**О. БОНДАРЕВ.**

*Урхас Кушкă шкулĕ.*

# «Досуг»



Научно - практическая конференция посвященная 100 летию чувашского народного поэта Петра Хузангая